27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 ФЕВРАЛЬ 20 ЫТЛАРИКУН 33(6784) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ҫуракине хатӗрленесси — ялти парторганизацисен хисеплӗ задачи

Пирӗн социализмлӑ ялхуҫалӑхӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тӑваттӑмӗш ҫураки умӗнче тӑрать. Хальхи вӑхӑтри ӗҫсем тырпулӑн ӑнӑҫлӑхне татса параҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарпа халӑх валли апат-ҫимӗҫсем, промышленноҫа—чӗртаварсем кирлӗ таран парса тӑрасси, тӗпрен илсен, колхозсемпе совхозсем тата МТС-сем ҫуракине ирттерме мӗнле хатӗрленнинчен килет.

Кӑҫал пирӗн иртнӗ ҫулхинчен тухӑҫлӑрах тырпул, ҫӗрулми, пахча-ҫимӗҫ туса илмелле. Ҫапла тума хушаҫҫӗ фронтпа ҫӗршывӑн интересӗсем. Апла пулсан, колхоз ялӗнчи мӗнпур вӑйсене вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешнӗ ҫӗре мобилизацилемелле. Ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе срокра тата лайӑх ирттересси—ялти парторганизацисен чи ответлӑ задачи пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ халӗ ялти парторганизацисен хӑйсен организациллӗ тата политикӑллӑ ӗҫӗсене пӗтӗмпех ҫав ответлӑ задачӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртес май йӗркелемелле.

Ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерме кирлӗ условисенчен пӗри вӑл—тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене вӑхӑтра тата лайӑх юсаса хатӗрлесси пулать. Республикӑри уйрӑм МТС-сенче ҫав ӗҫе вӑхӑтра пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Красноармейски тата Шӑхасан МТС-ӗсен коллективӗсем тракторсене юсаса пӗтернӗ. Вӑрнар, Елчӗк, Йӗпреҫ, Ишлей тата ытти МТС-сенче те тракторсене юсасси ӑнӑҫлӑн пырать. Ишлей МТС-ӗнче, нумай пулмасть, парторганизаци пуҫарнипе, тракторсене юсанӑ ҫӗрте ӗҫлекенсен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Унта Союзлӑ виҫӗ державӑн руководителӗсен Крымра пулса иртнӗ Конференцийӗн материалӗсене тӗплӗн ӑнлантарса панӑ, ҫакӑн хыҫҫӑн рабочисем тракторсене юсассине хӑвӑртлатас тӗлӗшпе ҫӗнӗ обязательствӑсем илнӗ. Халӗ вӗсем ҫав обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлаҫҫӗ. Унта социализмлӑ ӑмӑртӑва лайӑх организациленӗ, политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе тӗрӗс йӗркеленӗ. Коммунистсем МТС коллективне хӑйсен ӗҫӗнчи лайӑх примерпа тата большевикла сӑмахпа хавхалантараҫҫӗ. Тракторсене юсас тӗлӗшпе коммунистсем К. Мазяров, С. Иванов, Т. Ефимова юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем яланах малти ретре.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр МТС-сенче тракторсене юсасси пачах та ҫителӗксӗр пырать-ха. Ҫапла, Етӗрне МТС-ӗ тракторсене юсамалли плана пурӗ те 42,8 процент ҫеҫ тултарнӑ. Ҫӗмӗрле, Пӑрачкав, Кувакино, Тӑвай МТС-ӗсем те етӗрнесенчен нумай мала кайман. Хӑшпӗр ҫӗрте СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «Тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене хӗллехи вӑхӑтра пӑхса усрасси ҫинчен» йышӑннӑ постановление пӑсаҫҫӗ. Асӑннӑ ҫитменлӗхсем пӗтӗмпех тракторсемпе машинӑсене юсанӑ ҫӗрте ҫирӗп йӗрке тата дисциплина ҫук пирки пулаҫҫӗ. Парторганизацисем те чылай чухне ҫав ҫитменлӗхсемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ. Акӑ, Канаш МТС-ӗнчи парторганизаци ӗҫне илсе пӑхар. Унта тракторсемпе машинӑсене юсасси пачах та ҫителӗксӗр пырать. Апла пулин те, парторганизаци политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе тата социализмлӑ ӑмӑртӑва вӑйлатассишӗн, паха опытсене сарассишӗн, ӗҫлеме лайӑх условисем туса парассишӗн тӑрӑшмасть. Сӗнтӗр МТС-ӗ пирки те ҫавнах калама пулать. Унта политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатасси пирки ВКП(б) райкомӗ темиҫе решени те йышӑннӑ. МТС-ри парторганизаци ҫав решенисене тивӗҫлипе пурнӑҫа кӗртмест-ха.

Февраль — тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсаса пӗтермелли татӑклӑ уйӑх пулса тӑрать. МТС-сенчи парторганизацисен юсав ӗҫне вӑхӑтра тата лайӑх вӗҫлеме халех мерӑсем йышӑнмалла. Мӗнпур майсемпе вӑйсене мобилизацилес пулать. Политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе вӑйлатса, рабочисем хушшинче ӑмӑртӑва вӑйлатса пымалла, паха опытсене сармалла. Тирпейсӗр, кахал ҫынсене ҫивӗччӗн критиклес пулать. Ҫак ӗҫре парторганизацие комсомолпа профсоюз организацийӗсем пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ. ВЦСПС йышӑннӑ тӑрӑх, профсоюзсем пӗррӗмӗш кварталта тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫ мӗнле пынине пӑхса тухаҫҫӗ. Ҫак ӗҫе тӗплӗн ирттерес тесен, парторганизацисен профсоюзсене ертсе пырас ӗҫе тӗпренех лайӑхлатмалла.

Ялхуҫалӑх машинисемпе инвентаре юсаса хатӗрлес тӗлӗшпе колхозсемпе ял Советсенчи парторганизацисем ҫинче те пысӑк ответлӑх тӑрать. Колхозсенчи плугсем, сеялкӑсем, культиваторсем, сӳресем, урапасем, тырӑ турттармалли хатӗрсем, — ҫаксем пӗтӗмпех ҫуракине хатӗр пулмалла. Пуҫламӗш парторганизацисен, тимӗрҫ лаҫҫисем мӗнле ӗҫленине тӗрӗслесе тӑрса, кирлӗ вӑхӑтра пулӑшу памалла. Машинӑсемпе инвентаре юсас ӗҫе тума пултарулӑ колхозниксене, комсомолецсене явӑҫтармалла.

Халӗ колхозсем умне акма лайӑх вӑрлӑх хатӗрлес ыйту пӗтӗм пысӑкӗшпе тухса тӑрать. Республикӑри колхозсенчен нумайӗшӗсем вӑрлӑхсене кирлӗ чухлех хатӗрлесе, сортласа хунӑ. Ҫав вӑхӑтрах чылай районсенче вӑрлӑхсем тасатасси начар пырать-ха. Хӑшпӗр колхозсенче хывнӑ вӑрлӑхсене те тирпейсӗр пӑхса усраҫҫӗ. Вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫе халӗ ӗнтӗ пӗр кунлӑха та вӑраха яма юрамасть. Ялти пуҫламӗш парторганизацисен вӑрлӑх хатӗрлес ӗҫпе куллен интересленмелле.

Ҫуракине хатӗрленнӗ вӑхӑтра мӗнле те пулин пӗчӗк е кая хӑвармалли ӗҫсем ҫук. Машинӑсемпе вӑрлӑхсем хатӗрленипе пӗрлех, уя тислӗк, торф кӑлармалла, туртӑм вӑйне хатӗрлемелле, кӳлмелли хатӗрсене юсаса ҫитермелле. Коммунистсен пур ӗҫре те пример кӑтартса пымалла, организаторсем пулса тӑмалла. Колхозниксен массипе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлемелле. Сӗнтӗр районӗнчи «Ҫӗнӗ Юнга» колхозри парторганизаци коммунистсене пурне те кирлӗрех участоксенче ӗҫлеме хушнӑ. Вӗсем вара хӑйсен ӗҫне кӑтартуллӑн йӗркелесе пыраҫҫӗ, колхозниксене тӑрӑшса ӗҫлеме хӑйсен примерӗпе мобилизацилеҫҫӗ. Ҫавна пула парторганизацин авторитечӗ те ӳссех пырать. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче парторганизаци парти членне 9 ҫынна тата 11 ҫынна кандидата илнӗ. Халӗ коммунистсем ҫуракине хӗрсех хатӗрленеҫҫӗ.

Ялти парторганизацисен халӗ политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе пӗтӗмпех ҫуракине хатӗрленессине пӑхӑнтармалла. Колхозниксемпе колхозницӑсене кӑҫалхи ҫуракин пӗлтерӗшӗ ҫинчен, ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттерни нимӗҫ тискер кайӑкне хӑйӗн йӑвинчех пӗтерме пулӑшни ҫинчен ӑнлантарса памалла. Тӗнчери лару-тӑрупа хамӑр ҫӗршыври хыпарсене вӑхӑтра пӗлтерсе тӑмалла. Пуҫламӗш парторганизацисен политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе туса пыма комсомолецсене ялти интеллигенцие, колхоз активне анлӑн явӑҫтарас пулать. Вӑл ӗҫре вулав ҫурчӗсемпе вырӑнти пичетпе, стена хаҫачӗсемпе, художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсемпе тата ытти мӗнпур майсемпе усӑ курмалла. Коммунистпа комсомолецӑн, агитаторӑн вырӑнӗ халӗ тракторсемпе машинӑсене юсакан мастерскойсенче, уйхир бригадисенче, складсенче пулмалла. Унта вӗсен пӗтӗм культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе тата социализмлӑ ӑмӑртӑва организацилесе пымалла. Ҫуракине тӗплӗн хатӗрленсе лайӑх ирттерес тӗлӗшпе ялти парторганизацисем умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртмелле тӑвас тесен, ВКП(б) райкомӗсен ялти пуҫламӗш организацисене ертсе пырас ӗҫе татӑклӑнах вӑйлатмалла.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗнче

Варшава хулине юсама пулӑшасси ҫинчен

Ҫак кунсенче Польша Халӑх Совечӗн Президенчӗ Берут господин тата Польша Республикин Премьер-Министрӗ Осубка-Моравский господин СССР Совнаркомне ыйту янӑ. Вӑл ыйтура вӗсем Варшава хулине юсамалли плана тума экспертсем парса пулӑшма тата Варшава хулин тӗп районӗсене юсанӑ май тухакан тӑкаксен пӗр пайне хӑй ҫине илме ыйтнӑ.

СССР Совнаркомӗ Польшӑпа чикӗллӗ союзлӑ республикӑсен (Украина, Белоруссии тата Литва республикисен) представителӗсемпе канашланӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек йышӑннӑ:

1. Варшава хулине юсамалли плана хатӗрлес ӗҫре пулӑшма ҫителӗклӗ таран экспертсем ярас.

2. Варшава хулин тӗп районӗсене юсама каякан тӑкаксен 50 процентне, Польша Правительстви ыйтнипе, хамӑр ҫине илес.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Пурӑнмалли ҫуртӗпер хуҫалӑх предприятийӗсен 1945 ҫулхи январь уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ республикӑри пурӑнмалли ҫуртӗпер хуҫалӑх предприятийӗсен 1945 ҫулхи январь уйӑхӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухнӑ. Ӑмӑртура ҫаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Шупашкарти гостиница (директорӗ Додонова юлташ). Гостиницӑн лайӑх ӗҫлекен работникӗсене премилеме 3 пин тенкӗ укҫа панӑ;

Тасамарлӑхсене тасатакан Шупашкарти контора (заведующийӗ Васильева юлташ). Конторӑн ӑмӑртура палӑрнӑ работникӗсене премилеме 2 пин тенкӗ укҫа панӑ;

Шупашкар хулинчи канализаци (заведующийӗ Цветков юлташ). Канализаци хуҫалӑхӗн лайӑх ӗҫленӗ работникӗсене премилеме 2 пин тенкӗ укҫа панӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, ХЕВЕЛТУХАҪ ПРУССИРИ тӑшман группировкине ҫавӑрса илнӗ унка малалла хӗссе пырса, ВОРМДИТТ хулипе МЕЛЬЗАК хулине—ҫулйӗрсен паха узелне тата нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктӗсене—штурмласа туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата, тӑшманпа ҫапӑҫса, ПЛАУТЕН, НОЙХОФ, БОРНИТТ, КЛИНГЕНБЕРГ ялӗсене йышӑннӑ.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ВИСЛА шывӗн сулахай хӗррипе наступлени туса пырса, ГРУППЕ, ФЛЕТЕНАУ, БУШИН, СКШИНКЕН, МЕДЗНО, ОШЕ ялӗсене туртса илнӗ.

ПОМЕРАНИРЕ, ШТАРГАРД хулинчен кӑнтӑртарахра, пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене сирпе-сирпе янӑ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен ҫурҫӗртерехри вӑрмансенче хупӑрласа илнӗ тӑшман ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. 8.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. 2.000 нимӗҫе яхӑн тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем—13, тупӑсем—30, минометсем—35, пулеметсем—154, автомашинӑсем—384, ҫар пурлӑхӗ тиенӗ лавсем—120.

ПОЗНАНЬ хулинче пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкассишӑн ҫапӑҫнӑ, ВАРТА шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗррипе хулапа пӗрлешсе ларнӑ ялсене тытса илнӗ, ҫапла вара, хупӑрласа илнӗ тӑшман юлашкийӗсен аллинче ЦИТАДЕЛЬ кӑна тӑрса юлнӑ. Февралӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ку районра 6.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне яхӑн тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: тупӑсем—13, пулеметсем—52, винтовкӑсемпе автоматсем—6.000 ытла, автомашинӑсем—125, паровозсем—40, вагонсем—184, тӗрлӗрен ҫар пурлӑх склачӗсем—16.

СИЛЕЗИРЕ, БУНЦЛАУ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла ҫапӑҫса туртса илнӗ, вӑл шутра—ХЕРМСДОРФ, ХАММЕР, НОЙХАУС, РАУША, ШНЕЛЛЕРФУРТ, ТОММЕНДОРФ ятлӑ пысӑк ялсем. Февралӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ку районра 1.100 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БРЕСЛАУ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла кусса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ЗАХВИЦ, ХУБЕРТУСХОЗ, ВИРОВИЦ, ШЕНБАНКВИЦ, ГОРАУ, ГРЮНХАРТАУ, БРОЗЕВИЦ ятлӑ пысӑк ялсем.

Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинче хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӑн ҫапӑҫнӑ.

ДУНАЙ шывӗн ҫурҫӗр хӗрринче, КОМАРНО хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ГРОН шывӗнчен хӗвеланӑҫнерехре кӗрешекен ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен тунӑ атакӑсене сирпе-сирпе янӑ, тӑшмана ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухату кӳнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 16-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 106 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 41 самолетне персе ӳкернӗ.

ФЕВРАЛӖН 18-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 18-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑртарахра нимӗҫ ҫарӗсен ХЕВЕЛТУХАҪ ПРУССИРИ группировкине пӗтерсе тӑкассишӑн ҫапӑҫнӑ, РОБИТТЕН, ГАЛЛИНГЕН, ОРШЕН, ВИЛЬДЕНХОФФ, БУХХОЛЬЦ, ЛАЙС, ЛЯНГВАЛЬДЕ ялӗсене туртса илнӗ.

ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хули районӗнче пирӗн ҫарсем, ВИСЛА шывӗн хӗвеланӑҫ хӗррипе ҫурҫӗрелле наступлени туса пырса, тӑшманӑн ГРУДЗЯНДЗ (ГРАУДЕНЦ) хулинчи гарнизонне пӗтӗмӗшпех хупӑрласа илнӗ. ГРОСС-ДРАГАС, КРУШМОНТАУ, ГРОСС ЗИБСАУ, ВАРЛЮБИН ялӗсене туртса илнӗ.

ПОМЕРАНИРЕ, ШТАРГАРД хулинчен кӑнтӑртарахра тата кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах ШНАЙДЕМЮЛЬ хулинчен ҫурҫӗртерехри вӑрмансенче пирӗн ҫарсем тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ тепӗр ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. 2.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне яхӑн тыткӑна илнӗ, вӑл шутра—Шнайдемюль гарнизонӗн инженери службин начальникне КУРХАУП полковника тыткӑна илнӗ.

БРАНДЕНБУРГ провинцийӗнче, ШВЕРИН хулинчен кӑнтӑртарахра, пирӗн ҫарсем нимӗҫсен ҫирӗплетнӗ районӗнчи нумай вӑхӑтлӑха тунӑ опорнӑй пунктне хупӑрласа илнӗ пулнӑ. Ҫав тӗреклетнӗ пунктра нимӗҫсен тимӗрпе бетонран тунӑ оборонӑллӑ вӑтӑр сооружени пулнӑ. Нумай вӑхӑт хушши хупӑрласа тӑнӑ хыҫҫӑн тата артиллери питӗ хӑватлӑн ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн ҫав тӗреклетнӗ пунктӑн гарнизонӗ парӑннӑ. Пирӗн ҫарсем 1.245 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ тата ҫакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: тупӑсем—48, минометсем—25, огнеметсем—15, пулеметсем—230, карабинсем—800, автомашинӑсем—40, прицепсем—338.

ПОЗНАНЬ хулинче пирӗн ҫарсем ЦИТАДЕЛЬТЕ ҫирӗпленсе ларнӑ тӑшман гарнизонне пӗтерсе тӑкассишӑн ҫапӑҫнӑ.

Силезире пирӗн ҫарсем ЗОГАН хулипе НАУМБУРГ хулине ҫапӑҫса туртса илнӗ.

БРЕСЛАУ (БРЕСЛАВЛЬ) хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, ЛАНДАУ, БЕЙЛАУ, КАПСДОРФ, ГРОССЗЕГЕВИЦ, ТРОШДОРФ, ДУКВИЦ, ЯСВИЦ, КЛАЙН-ТИНД, ДЮРР ХАРТАУ, ТИФЕНЗЕ, ПУДИГАУ ялӗсене тытса илнӗ. Ҫавӑнпа пӗр вӑхӑтрах БРЕСЛАУ хулинче хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӑн ҫапӑҫнӑ.

ДУНАЙ шывӗн ҫурҫӗр хӗрринче, КОМАРНО хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшман пехотипе танкӗсен пысӑк вӑйӗсен атакисене сирсе тӑнӑ. Февралӗн 17-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче пирӗн ҫарсем ку районра нимӗҫсен 43 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 17-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 115 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 88 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем нимӗҫ ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири группировкине ҫавӑрса илнӗ унка малалла хӗссе пынӑ. Совет чаҫӗсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, пысӑк вӑрмана гитлеровецсенчен тасатнӑ. Вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ темиҫе пункта тытса илнӗ. 2.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ тата тӑшманӑн 22 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 22 тупӑ, 70 пулемет, 65 автомашина, ҫар хатӗрӗсем тиенӗ икӗ чугун ҫул эшелонӗ тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

* * *

Грудзяндз (Грауденц) хули районӗнче пирӗн ҫарсем хаярран ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн тӑшман оборонине татнӑ. Совет чаҫӗсем нимӗҫ позицийӗсен ҫав татнӑ вырӑнӗсене ыткӑнса кӗрсе кайнӑ та ҫӳреме йывӑр шурлӑхлӑ вырӑнпа пырса тӑшмантан иртсе кайнӑ. Грудзяндз (Грауденц) хулинчи гарнизонне ҫавӑрса илнӗ. Гитлеровецсем, хӑйсене хупӑрласа илнӗ унка татма тата «михӗрен» ҫӑлӑнса тухма тӑрӑшса, пӗтӗм вӑйпа

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

Крымри Конференци решенийӗсем ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хушаҫҫӗ

Союзлӑ виҫӗ держава руководителӗсен Крымра пулса иртнӗ историллӗ конференцийӗ ячӗпе Шупашкарти чӑлха фабрикинче ҫак кунсенче митинг пулчӗ. Крымри конференцин решенийӗсем ҫинчен митингра коммунистка Пименова юлташ каласа панӑ. Рабочисемпе работницӑсем ҫав решенисем ҫинчен питех те интересленсе итленӗ, вӗсем пирки хӑйсен шухӑшӗсене тухса каланӑ.

— Крымра пулса иртнӗ конференцире виҫӗ аслӑ державӑн руководителӗсем — Сталин, Черчилль тата Рузвельт—йышӑннӑ решенисем,—тенӗ митингра стахановка Пимпли юлташ,—ҫӗнтерӳ тумалли ҫула кӑтартса параҫҫӗ. Ҫав ҫул кӗскерех пултӑр тесен, пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлине ытлӑн-ҫитлӗн туса памалла. Конференци решенийӗсем ҫине ответлесе, эпӗ хамӑн нормӑна кулленех 120 процент тултарса пыма пулатӑп.

Ҫавӑн пек обязательствӑсем ытти стахановецсемпе бригадӑсем те илнӗ. Фабрика коллективӗ хӑйӗн обязательствинче чӗртавара, электроэнергие перекетлеме, таварӑн хӑйне ларакан хакне чакарма, подсобнӑй хуҫалӑха ҫуракине хатӗрлесе ҫитерме палӑртнӑ.

Ҫак кунсенче фабрика кулленхи графика тултарса ӗҫлет. Юлашки икӗ кунра продукцие графикпа пӑхнинчен 1,5 хут ытларах туса кӑларнӑ. Фабрикӑра Уралри паллӑ стахановецӑн Егор Агарковӑн меслетне сараҫҫӗ. Хӑшпӗр бригадӑсене пӗрлештерсе, юлашки ӗҫ вӑйне урӑх ҫӗре куҫараҫҫӗ, ҫав бригадӑсенче рабочисен сахалтарах йышӗпех унччен тунӑ ӗҫе тӑваҫҫӗ.

Совет Союзӗн Совнаркомӗнчен, Совет Союзӗн Оборона Халӑх Комиссариатӗнчен тата ВКП(б) Центральный Комитетӗнчен

Совет Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, Совет Союзӗн Оборона Халӑх Комиссариачӗ тата ВКП(б) Центральный Комитечӗ питӗ хытӑ хуйхӑрса ҫакӑн ҫинчен пӗлтереҫҫӗ: Февралӗн 18-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири ҫапӑҫу хирӗнче йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн, Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсен командующийӗ арми генералӗ Иван Данилович ЧЕРНЯХОВСКИЙ—большевиксен партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ тата Хӗрлӗ Ҫарӑн чи лайӑх руководителӗсенчен пӗри — вилнӗ.

ЧЕРНЯХОВСКИЙ юлташ вилнипе государство Отечественнӑй вӑрҫӑра мала тухнӑ талантлӑ ҫамрӑк полководецсенчен пӗрне ҫухатрӗ.

Арми генералне И. Д. ЧЕРНЯХОВСКИЕ Советлӑ Литва республикин столицинче Вильнюс хулинче, арми генералӗн ЧЕРНЯХОВСКИН ҫарӗсем нимӗҫ захватчикӗсенчен ирӗке кӑларнӑскеренче, пытараҫҫӗ.

Арми генералне ЧЕРНЯХОВСКИЕ государство шучӗпе пытараҫҫӗ. Арми генералӗн И. Д. ЧЕРНЯХОВСКИН ятне ӗмӗрлӗхе асра тытмалла тӑвас тесе, ӑна Вильнюс хулинче памятник лартаҫҫӗ.

Литва ССР-ӗн Совнаркомӗпе Литвари Коммунистсен (большевиксен) партийӗн Центральный Комитетӗнчен

Литва ССР-ӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе Литвари Коммунистсен (большевиксен) партийӗн Центральный Комитечӗ февралӗн 18-мӗшӗнче, Хӗвелтухӑҫ Пруссири ҫапӑҫу хирӗнче йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн, Белоруссири 3-мӗш фронтӑн командующийӗ арми генералӗ Иван Данилович ЧЕРНЯХОВСКИЙ — большевиксен партийӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ тата Хӗрлӗ Ҫарӑн чи лайӑх руководителӗсенчен пӗри—вилни ҫинчен хурланса пӗлтереҫҫӗ.

Литва халӑхне ирӗке кӑларас ӗҫе хӑйӗн пӗтӗм вӑйӗпе пӗлӗвне панӑ талантлӑ полководец ЧЕРНЯХОВСКИЙ юлташа Литва халӑхӗ нихӑҫан та манмӗ.

И. Д. Черняховский

Хӗвелтухӑҫ Пруссири ҫапӑҫу хирӗнче йывӑр аманнӑ хыҫҫӑн, арми генералӗ Иван Данилович Черняховский юлташ вилнӗ.

Черняховский юлташа, Отечественнӑй вӑрҫӑ Геройне тата Хӗрлӗ Ҫарӑн паллӑ полководецне, пӗтӗм совет халӑхӗ пӗлсе тӑрать.

Черняховский юлташ 18 ҫула ҫитсен Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ та пӗрмаях Хӗрлӗ Ҫарта тӑнӑ. Вӑл Хӗрлӗ Ҫарӑн артиллери, танковӑй тата стрелковӑй ҫарӗсенче взвод командирӗнчен пуҫласа дивизи командирне тата корпус командирне ҫити хӑпарнӑ. 1942 ҫулта Черняховский юлташа арми командующийӗ туса хунӑ, 1944 ҫулта — фронт ҫарӗсен командующийӗ вырӑнне лартнӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче вӑл, Совет Союзӗпе Германи фрончӗн чи паллӑ участокӗсенче арми командующийӗ тата фронт командующийӗ пулса, Воронежран Тарнополе ҫити, Оршӑран Кенигсберга ҫити ҫӗнтерӳллӗ наступлени туса пынӑ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр ҫапӑҫӑвӗсенче Черняховский ятне Верховнӑй Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ хӑйӗн чылай приказӗсенче паллӑ тунӑ.

Совет Правительстви Черняховский юлташа пӗрре кӑна мар аслӑ наградӑсем парса паллӑ тунӑ. Икӗ хут ӑна Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ, тӑватӑ хут Хӗрлӗ Ялав орденӗпе, Богдан Хмельницкин 1-мӗш степень орденӗпе, 1-мӗш степень Кутузов орденӗпе тата икӗ хутчен 1-мӗш степень Суворов орденӗпе наградӑланӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Тӑван Совет ҫӗршывӗ ҫӗнтерессишӗн пыракан кӗрешӳре хӑйӗн чаплӑ ӗҫӗсемпе палӑрнӑ Черняховский юлташа пӗтӗм совет халӑхӗ тата пӗтӗм Хӗрлӗ Ҫар ҫав тери хисепленӗ.

Ленин—Сталин партийӗн ӗҫӗсене чунтан парӑннӑ Черняховский юлташ хӑйӗн пурнӑҫне Хӗрлӗ Ҫаршӑн тата Совет ҫӗршывӗшӗн хучӗ.

Арми генералӗ Черняховский юлташ ҫӗнтерӳллӗ ҫапӑҫнӑ ӗҫ ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ.

Жуков, Василевский, Ворошилов, Тимошенко, Буденный, Шапошников, Булганин, Щербаков, Антонов, Говоров, Баграмян, Макаров, Хохлов, Рокоссовский, Конев, Петров, Малиновский, Толбухин, Воронов, Хрулев, Яковлев, Федоренко, Новиков, Воробьев, Пересыпкин, Штеменко, Ф. Ф. Кузнецов, Голиков, Смородинов, Покровский.

ССР СОЮЗӖН СОВНАРКОМӖНЧЕ

Фронтра вилнӗ арми генералӗн Иван Данилович Черняховскин ҫемьине пулӑшасси ҫинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫапла йышӑнать:

1. И. Д. Черняховский юлташӑн ҫемьине: арӑмне—Анастасия Григорьевна Черняховскаяна, хӗрне—Неонилӑна тата ывӑлне—Олега пӗр вӑхӑтлӑха 125.000 тенкӗ укҫа парас.

2. И. Д. Черняховский юлташӑн ҫемьине ҫакӑн чухлӗ пенси памалла тӑвас: арӑмне А. Г. Черняховскаяна ӗмӗрлӗхе уйӑхне 2.000 тенкӗ, хӗрне Неонилӑна тата ывӑлне Олега—вӗсем вӗренсе тухиччен уйӑхне 1.000-шер тенкӗ памалла тӑвас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 18-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

çапăçнă. Кун каçиччен тăшман пехотипе танкĕсем темиçе хут та контратакăна тухнă. Пирĕн пехотинецсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă та хула тулашне вăркăнса кĕрсе кайнă. халь вĕсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртса юлнă. Гитлеровецсенчен 42 тупă, 440 автомашина, 246 мотоцикл, тĕрлĕрен çар пурлăхĕн пилĕк складне тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. 400 нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронтра Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Кожедуб майор ертсе пынă 6 самолет-истребитель сывлăшра нимĕçсен 30 самолетне тĕл пулнă. Тăшман самолечĕсем пирĕн каçăсем çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Совет летчикĕсем тăшмана çав тери хăвăрт атакăланă та унăн речĕсене арпаштарса янă. Нимĕç летчикĕсем хăйсен бомбисене ним йĕрки-паллисĕр хăйсен çарĕсем çинех пăрахнă те пирĕн летчиксенчен тарма пуçланă. Пирĕн истребительсем тăшмана хăваласа пырса, нимĕçсен 8 самолетне персе ӳкернĕ. Вăл шутран тăшманăн виçĕ истребительне Кожедуб майор пĕтерсе тăкнă.

* * *

Силезире пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Икĕ кун çапăçнă хыççăн пĕр соединени чăсĕсем нимĕçсен гарнизонне аркатса тăкнă та Заган хулине тытса илнĕ. Хула урамĕсенче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 1.400 вилли выртса юлнă. Заган хули нимĕçсен Бобер шывĕ çинчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ тата çулйĕрсен пахă узелĕ пулса тăрать. Ку хула патне 6 чугун çул пырса тухаççĕ. Советсен ытти чăсĕсем, наступление малалла вăйлатса пырса, пани Квейо шывĕ çинче ларакан Наумбург хулине туртса илнĕ. Пĕр чугун çул станцийĕнче фронт çарĕсем 14 паровоз, тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем тиенĕ 900 вагон тытса илнĕ. 800 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Пирĕн летчиксем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 35 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, аэродромсенче тăшманăн 30 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕн кăнтăр пайĕнче тăшман транспортне тата хуралти катерне шыва путарнă.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронтра нимĕçсен 91-мĕш артиллери полкĕн 3-мĕш дивизионĕн командирне Вилли Нафцигер капитана тыткăна илнĕ. Вăл çапла каласа кăтартнă: «Мăн дивизиона 6-мĕш пехотнăй дивизири 6-мĕш артиллери полкĕ аллине панăçç. Офицерсен канашлăвĕнче полк командирĕ Брунг майор мухтана-мухтана çапла каларĕ: «Пирĕн оборона питĕ вăйлă çирĕплетнĕ, ăна техникăпа питĕ хытă тултарса лартнă, ун пек оборонăна вырăссем татма пултарайрас çук», терĕ. Ун чухне ытти офицерсем те çавăн пекех шутлатчĕç. Анчах та темиçе кун кăна иртрĕ, эпир пурте пысăк хуйха ӳкрĕмĕр. Çын пырса тĕкĕнме пултарайми текен позицисене вырăс çарĕсем часах сĕнтерсе тĕкрĕç. Пирĕн çĕмĕрсе тăкнă чăсем ним йĕркипаллисĕр каялла чакма пуçларĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пурте пĕтрĕ. Ку вăрçă Германишĕн ăнăçлă пĕтĕ тесе ĕмĕтленмелли нимĕн те çук. Пирĕн çĕршыв халран кайрĕ. Унăн резервĕсем пĕтсе пыраççĕ».

—o—

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕн малтанхи кунĕ

ШУПАШКАРТА.

Февралĕн 18-мĕшĕ—комсомолпа профсоюзсен йĕлтĕрлĕ кросĕн малтанхи кунĕ. Республика столицийĕнчи хастарлă физкультурниксем ăмăртăва тухнă.

Акă йĕлтĕрлĕ кросăн старчĕ. Унта 3.570 йĕлтĕрçĕ пухăннă. Вĕсем хушшинче «Большевик», «Динамо», «Сталинец» физкультура обществисем, «Водосвет», «Вышивка», «Кожупряжь» тата ытти спорт коллективĕсем, хулари учрежденисемпе предприятисенчи, шкулсенчи çамрăксем пур. Пĕр «Сталинец» обществăран кăна 500 çын, всевобуч пункчĕсенчен 200 çын хутшăннă.

Кросăн малтанхи кунĕнче «Сталинец» физкультура обществинчи Шестипалов 10 километра 40 минутра, Шаркова (çав обществăранах) 5 километра 28 минутăра, «Большевик» обществăри Орленко 3 километра 16 минутăра чупса тухса, лайăх результатсем кăтартрĕç. Кроса хутшăннă 3.570 çынран 3.420 çын ГТО нормисене панă.

УЛАТĂР

Профсоюзпа комсомолăн йĕлтĕрлĕ кросĕн малтанхи кунĕ Улатăр хулинче те пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Кунта кросăн малтанхи кунне палăртас май клубра çамрăксен вечерĕ пулса иртнĕ. Кроса пурĕ 478 çын хутшăннă.

КАНАШ.

Районĕпе пурĕ 1.483 çын кроса хутшăннă. Вĕсенчен комсомолецсем 711 çын. Участниксенчен 1.088 çын ГТО нормисене, 383 çын БГТО нормисене панă.

М. И. КАЛИНИН.

Ял Совечĕн авторитетне ӳстерессси пирки тăракан ыйту çинчен

(Зотов юлташăн статьине сӳтсе-явнин хăшпĕр итогĕсем)

Зотов юлташ «Ял Совечĕн авторитетне ӳстерессси çинчен» çырнă статьяна, 1944 çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче «Известия» хаçатра пичетленĕскерне, ялсенче кăна мар, районсемпе облаçсенче те анлăн сӳтсе яврĕç. Çакă ĕнтĕ статьяра çĕкленĕ ыйтусем вăхăтлă та кирлĕ ыйтусем пулнине çирĕплетсе парать.

Вăрçă государствăпа общество организацийĕсен пур ĕçĕнче те, çав шутрах ял Совечĕсен ĕçĕнче те, хăйĕн йĕрне хăварчĕ. Вăл вĕсене хăйсен ĕçне вăрçă хушнă пек, «Пăлтах, фронт валли» текен лозунга пурнăçа кĕртес май урăхлатса çĕнетме хушрĕ. Хăюллăнах çапла калама пулать: влаçăн вырăнти органĕсем—ял Совечĕсем питех те нумайĕшĕ вĕсем çине хунă ĕçсене тивĕçлипех пурнăçа кĕртрĕç.

Паллах, ял Совечĕсен ĕçĕнче сахал мар йывăрлăхсем пулчĕç; тата вĕсем халĕ те пур-ха. Çав йывăрлăхсем вăрçă вăхăтĕнче ял Совечĕсене ертсе пырас ĕçе ĕлĕкрех ку ĕçе сахал пĕлнĕ çынсем чылай хутшăннинчен нумай килеççĕ. Анланмалла ĕнтĕ, ял Совечĕсем çине хунă ĕçсемпе вĕсен прависене уçăмлăн та конкретлăн ăнланса илме çĕнĕ çынсене малтанхи вăхăтра çăмăлах пулман.

Практикăра ял Совет ĕçĕнчи чи паллă ыйтусенчен пĕри вăл—колхоза ертсе пыракансемпе çыхăнса тăрас ыйту, ял Совет председателĕпе колхоз правлени председателĕн влаçĕнчи уйрăмлăх пирки тăракан ыйту пулать. Эпĕ çапла шутлатăп: çак ыйтăва вырăнта тивĕçлипе татса панă çерте ял Совечĕ хăйĕн обязанноçĕсене пĕлет, тесе шанчăклăнах калама пулать.

Анчах та, фактсем кăтартса панă тăрăх, çак ыйтура хăшпĕр пăтраштарусем пур-ха. Çакна аса илтерни те çителĕклĕ: нумаях та пулмасть ĕлĕкрех ял Совечĕн ĕçне колхоз правленийĕн туса пымалла, ял Советне колхоз правленийĕпе улăштармалла, тесе калакансем те илтĕнетчĕç. Çавăн пек сĕнӳсене паракансем ял Совечĕпе колхоз правленийĕ хушшинче питех те пысăк уйрăмлăх пуррине пачах та ăнланман.

Ял Совечĕсем вĕсем—совет влаçĕ, государство влаçĕн вырăнти органĕсем; вĕсене пĕтĕм халăх, пĕртан тата тӳрремĕн суйлас правăпа усă курса, вăрттăн сасăласа суйласа хăварнă. Союзлă республикăсен Конституцийĕсем тăрăх, ял Совечĕсем хăйсен территорийĕнче культурăпа политика тата хуçалăх строительствине ертсе пыраканскер, вырăнти бюджета туса йĕркелекен, хăйсене пăхăнса тăракан управлени органĕсене ертсе пыракан, государство йĕркелĕхне сыхласа тăракан, çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетме пулăшакан, законсене пăхăнса пымалла тăвакан тата граждансен прависене сыхлакан власть пулса тăраççĕ.

Кусем вĕсем, калас пулать, ял Совечĕсен пĕтĕмĕшле задачисем; вĕсене Конституцире палăртса панă. Тĕплĕнрех калас пулсан, ял Совечĕсен, сăмахран, çак ĕçсене туса пырас пулать: шкулсене, больницăсене, амбулаторисене вутă тупса парасси, вĕсен çурчĕсене юсасси, общество çурчĕсене: клубсене, вулав çурчĕсене тата ыттисене те йĕркеллĕ те тирпейлĕ тытса тăрасси, вырăнти çулсене, кĕперсене лайăх тытса усрасси; вырăнти благоустройствăпа çыхăнса тăракан ыйтусем, урамсемпе площадьсене илемлĕ тытса тăрасси, пушартан сыхланас ĕçсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине сăнаса тăрасси. Сăмахран, колхоз правленийĕ улăма пурăнмалли çуртйĕрсем çывăхĕнче купаласа хурать е урама мĕнле те пулин материал, инвентарь хурса тултарнă. Ял Совечĕ ялти тивĕçлĕ йĕркелĕхе тата тирпейлĕхе сăнаса тăрса, пушартан сыхланмалли правилăсене пăхăнипе пăхăнманнине сăнаса тăрса, çакăн пек йĕркесĕрлĕхсем çинчен колхоза кăтартса пама тата халиччен пулнă йĕркесене пăхăнтарма пултарать тата çапла тума тивĕçлĕ те.

Паллах ĕнтĕ, ял Совечĕсем, власть органĕсем пулса тăрса, тырпул тухăçне ӳстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишен, пĕтĕмĕшпе каласан, колхоз хуçалăхне вăйлатса пырассишĕн интересленмелле. Вĕсен колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене вăхăтра пурнăçа кĕртчĕр тесе тăрăшмалла. Финанс Халăх Комиссариачĕпе Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕсене пулăшса пымалла.

Кунсăр пуçне хальхи вăхăтра красноармеецсен çемьисене пулăшасси те, вăрçă инвалидĕсене ĕçе вырнаçтарасси те ял Совечĕн обязанноçĕ пулса тăрать. Ял Совечĕ, государство влаçĕн органĕ пулса тăрса, колхозри йĕркесĕрлĕхсем пирки пĕлтернисене, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем тĕлĕшпе колхоз правленийĕ тĕрĕс мар туни çинчен панă жалобăсене пăхса тухмасăр хăварма пултараймасть.

Пĕр сăмахпа каласан, ял Совечĕсен прависемпе обязанноçĕсем чылаях нумай, вĕсене ял Совечĕсем çинчен çырнă нимĕнле «Положени» те тĕплĕн кăтартса пама пултараймасть. Вăл «Положени» ял Совечĕ туса пымалли ыйтусен калăпăшне кăна палăртса пама пултарать.

Колхоз пирки вара пачах урăхла калавалла. Вăл государство органĕ пулса тămасть. Колхоз вăл—ялхуçалăх артелĕ, хресченсем хуçалăха пĕрле тытса тăма пĕрлешсе тунă кооперативлă-производствăлла пĕрлешӳ. Унăн задачи—пĕрлешнĕ хресченсен интересĕсем хушнă пек ялхуçалăхне май пур таранах усăллăн аталантарса пырасси. Çакна туса пыма колхоз правленине суйласа хăвараççĕ, вăл вара пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçне ертсе пырать.

Анланмалла ĕнтĕ, колхоз правленинче ĕçлеме политика енĕпе авторитетлă çынсене кăна мар, тата ялхуçалăхне тытса пырас тĕлĕшпе те опыт пухнă çынсене суйлаççĕ. Правлени колхозăн мĕнпур хуçалăх ĕçĕсене—уйхир ĕçне, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе, пĕтĕм хуçалăха йĕркелесе пырас ĕçе колхозри çынсене уйхирте ĕçлеме те тата колхозăн шалти организацийĕсенче—фермăсенче, тырпул усрамалли çуртсенче, инвентарьсене юсанă çĕрте, вĕсене сыхласа усранă çĕрте тата ытти ĕçсенче ĕçлеме те валеçсе тăратас ĕçе туса пырать. Колхоз правленийĕ машинно-тракторнăй станципе договор тăвать, çавăн пекех тата тĕрлĕ организацисене ялхуçалăх продукчĕсем тăратас тĕлĕшпе договорсем тăвать.

Çакăнтан курăнать ĕнтĕ, колхоз председателĕпе ял Совет председателĕн ĕçĕсем, пĕр-пĕринпе нумай çĕрте тата ялан çыхăнса тăраççĕ пулин те, пачах урăхла пулса пыраççĕ. Сăмахран, ял Совечĕ хăйĕн ялĕсем хушшинчи çулйĕрсене йĕркене кĕртме кирлĕ тесе шутлать. Паллах, çак ĕçпе колхоз ял Советĕнчен кая мар интересленет. Анчах, çав ĕçшĕн колхоз тӳрремĕнех ответ тытман пирки, ял Совечĕ хăйĕн администрацилле влаçĕпе усă курса каламасăр, колхоз çулйĕрсене юсама тытăнмасть. Каламасăрах паллă, çак ĕçе тума хушиччен малтан ял Совечĕн колхоз председателĕпе вăл хăçан тата мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ пама пултарасси çинчен калаçса татăлас пулать.

Çак примерсене эпĕ ял Совечĕпе колхоз правленийĕн ĕçĕсем мĕнле пулса пымаллине ăнлантарса парас тесе илсе кăтартатăп.

Колхоз правленийĕн председателĕ колхозăн хуçалăхри пĕтĕм ĕçĕсене ертсе пырать пулсан тата унăн çитĕнĕвĕсене хуçалăхри ӳсĕмсем тăрăх виçеççĕ пулсан, ял Совечĕн председателĕ вара—суйласа лартнă тата власть пана çын, уншăн канцелярири хăйне уйрăм ĕçсене пĕлни мар (вĕсене пĕлни, паллах, лайăх ĕнтĕ), политикăпа культура тĕлĕшĕнчен нумай пĕлни вырăнти пурнăç ыйтăвĕсене, çавăн пекех тата хăйне государство хушнă ĕçсене татса пама пĕлни ытларах кирлĕ. Ял Совечĕн председателĕн совет принципĕсене практикăра пурнăçа кĕртсе пымалла, ĕç çине парти хушнă пек, большевикла пăхмалла; анчах çакă вăл ял Совет председателĕ обязательно партире тăракан çын пулмаллине пачах та пĕлтермест, мĕншĕн тесен ял Совечĕн лайăх ĕçĕ, ăна кирек кам пурнăçа кĕртсен те, чăннипе илсен, парти ĕçĕ пулса тăрать.

«Известия» хаçатăн страницисенче Зотов юлташăн статьине сӳтсе-явни акă мĕн пирки усăллă: вăл ман шутпа, ял Совечĕпе колхоз правленийĕн ĕçĕнчи уйрăмлăха уçăмлăнрах палăртса парать. Паллах, Зотов юлташ хăй çĕкленĕ тĕп ыйту енĕпе,—«Ял Совечĕн авторитетне ӳстересси çинчен» тăракан ыйту енĕпе,—тĕрĕс калать. вăл: «ял Совечĕсен нумай руководителĕсем хăйсем те хальхи вăхăтра пĕр-пĕр ялхуçалăх артелĕ умне мĕнле тĕп ыйтусем лартмаллине çителĕклĕ уçăмлă пĕлмеççĕ, район совет исполкомĕ вара вĕсене çавна тума сахал вĕрентет», «ял Совечĕн авторитечĕ ял Совечĕн решенийĕсемпе ыйтăвĕсем çине районри организацисем, пуринчен малтан райсовет исполкомĕ, мĕнле пăхнинчен нумай килет», тесе тĕрĕс калать.

Калас пулать, Совет влаçĕн çӳлте тăракан органĕсен хăйсен практикăллă ĕçĕнче ял Совечĕн работникĕсем çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, вĕсен политикăллă пĕлĕвне тата ĕçри пултарулăхне ӳстерме вĕсене пулăшса пымалла, пĕтĕм ĕçшĕн усăллă пулас пек туйăнать пулсан, вĕсен ĕçри пуçарулăхне вăйлатса тата хавхалантарса пыма тăрăшмалла.

Паллах, авторитет çӳлтен килмест, вăл ахалех пулса тămасть, ăна хĕрӳллĕ ĕçпе çĕнтерсе илмелле, тесе шутлакан юлташсем те тĕрĕс калаççĕ. «Чăн-чăн авторитета, хăйсене халăх пысăккăн хисеплессине ял Совечĕсем питĕ лайăх ĕçленипе кăна, правительство решенийĕсене, совет государствин законĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе кăна, государство лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме халăха пĕлсе организацилленипе кăна, Совет ĕçне халăхăн анлă массисене явăçтарнипе кăна çĕнтерсе илме пултараççĕ» (Горлов юлташ, Одесса).

Çак шухăшсем, çиелтен пăхсан хирĕç-хирĕçле шухăшсем пек курăнаканскерсем, чăннипе илсен, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ. Ял Совечĕн ĕçĕсем тĕрлĕ енпе пулса пыраççĕ, вăл халăхпа тӳрремĕнех çыхăнса тăрать, унăн ĕçĕсем те нумай чухне халăх куçĕ умĕнче пулса иртеççĕ. Çавăнпа ăнланмалла та ĕнтĕ, суйлавçăсем ял Совечĕн ĕçне чи малтан унăн уссине курса хаклаççĕ. Суйлавçăсем ял Совечĕн председателĕ хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пынине, вăл государствăн, колхозăн интересĕсене çирĕп пăхăнса ĕçленине, йĕркелĕхе сăнаса тăнине, вăл колхоз пурнăçне тĕплĕн пĕлсе тăнине, хуçалăхпа йăлари кăткăс ыйтусене татса пама тивĕçлипе пулăшнине курса тăраççĕ пулсан,—çавăн пек председателĕн, ним иккеленмелли те çук, авторитет пулать тата халăх ун сăмахне итлет.

Ял Совечĕн ĕçĕ нумай енлĕ. Тĕрлĕ облаçсемпе республикăсенче унăн хăйне евĕр уйрăмлăхсем пур. Сăмахран, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă облаçсенче ял Совечĕсем умĕнче пĕтĕмĕшле ыйтусемпе пĕрле,—çуракине хатĕрленес, инвентарьсене юсас тата ытти ыйтусемпе пĕрле,—колхозниксем валли пурăнмалли çуртсем, хуçалăх çурчĕсем лартас тата юсас; шкулсене, больницăсене, ветеринари пункчĕсене çĕнĕрен йĕркелесе ярас тата ытти нумай ыйтусем те питĕ çивĕччĕн тăраççĕ.

Ял Совечĕсем ялсене план тăрăх ӳстерсе пырас ĕçшĕн, çавăнпа пĕрлех колхозăн хуçалăх çуртйĕрĕсене лайăххрах вырнаçтарса лартас ĕçшĕн те хăшпĕр таран ответ тытаççĕ. Колхозăн çуртйĕрĕсене ялăн пĕтĕм планне пăсмасăр вырнаçтарса лартмалла, çав вăхăтрах вĕсене колхоз хуçалăхĕшĕн те килĕшӳллĕ вырăна лартмалла.

Ял Совечĕн ĕçĕ нумай енĕпе председательпе секретарьтен, вĕсем ĕçе организацилеме пултарнинчен килет тесе, корреспонденцисенче тĕрĕс палăртрĕç. Мĕн тумаллине пĕлни кăна çителĕклĕ мар-ха, унсăр пуçне тата ĕçе пурнăçлама пĕлни кирлĕ. «...политикăллă тĕрĕс çулйĕре кăтартса панă хыççăн организациллĕ ĕç пурне те, вăл шутрах политикăллă çулйĕрĕн хăйĕн кунçулне те,—вăл пурнăçа кĕрессине, е пурнăçа кĕмесĕр юлассине те,—татса парать» (И. Сталин). Çавăнпа та ял Совечĕн организациллĕ-практикăллă ертсе пырас ĕçĕ çине ялан тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Эпĕ ку статьяра Зотов юлташăн статьине сӳтсе явнă чухне çĕкленĕ чылай ыйтусем çинче чарăнса тăмастăп. Вĕсенчен нумайĕшне уйрăм законсем кăларса татса парас пулать, нумайĕшне вырăнсенчи совет тата парти организацийĕсем пĕрле ăнăçлăнах татса пама пултараççĕ. Советсен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăраканни вăл — ĕç çине государство хушнă пек пăхасси, ял Совечĕ умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс татса парасси.

(«Известия» хаçат, 1945 çулхи февралĕн 14-мĕшĕ).

Великобритани Премьер-Министрĕ У. Черчилль калани

Совет Союзĕнчен тухса каяс умĕн Великобритани Премьер-Министрĕ У. Черчилль февралĕн 14-мĕшĕнче Крымри аэродромра кинохроника микрофонĕ умĕнче çапла каласа панă:

«Ермаченков генерал-полковник, вырăс çарĕпе сывлăш-çар флочĕн кунта пухăннă офицерĕсемпе салтакĕсем, королĕн сывлăш-çар вăйĕсен офицерĕсемпе салтакĕсем.

Вуникĕ кун каярах эпир вăрçăпа арканнă Крымри çак аэродрома аннă хыççăн тĕнчере пысăк ĕçсем пулса иртрĕç. Виçĕ аслă державăн яланхи туслăхĕ тата пĕрлешсе ĕçлени çинчен тĕплĕрех те ку таранччен хинчен авторитетлăрах калаçса панă. Халĕ ĕнтĕ пирĕн тăшман çĕршывĕн чĕрине кĕрсе, нацистла тискер тиранне яланлăхах аркатса тăкмалла. Вăл этемлĕх малалла аталанассине, унăн малашнехи прогресне хăратса тăнă. Çав çул çинче тăшман пире чăрмантарма хăтланчĕ. Пирĕн халăхсем пурте пĕрле, пирĕн виçĕ халăх тата тĕнчери ытти нумай халăхсем вăл чăрмавсене çĕмĕрсе тăкрĕç. Çав кĕрешӳре малта пырса, совет çарĕсем пысăк чапа тухрĕç. Кашни çĕршыврах халăхсен анлă массисене телейлĕ те тулăхлă пурнăç парас тесе, халăхсем мирлĕ пурнăçпа, ирсĕр агрессирен, тискер агрессирен пĕр хăрамасăр, вăрçă йывăрлăхне урăх нихăçан та тӳсмесĕр пурăнччăр тесе, эпир кальхи вăрçă пĕтнĕ хыççăн пурте пĕрлешсе ĕçлеме пултăмăр. Пирĕн умра пуласлăх уçăлать. Çапла пултăр тесе, хамăрăн вăй-хала, хамăр çирĕп шухăшсене, хамăрăн иксĕлми пурне çа вăйне çав ĕçе тума парар.

Паян кунта эпир пурте пĕрле пухăннăшăн тата королĕн сывлăш-çар вăйĕсен подразделенийĕ Сирĕнпе пĕрле пулса, вырăссем епле хăналама пĕлнине курма пултарнишĕн эпĕ çав тери савăнатăп.

Ку ĕнтĕ пулас ăрусем пухмалли çимĕçĕн вăрлăхĕ пулса тăрать. Çав ăрусем эпир халĕ тăрăшнин çимĕçĕсемпе усă курмалла пулĕç.

Россия çĕрĕнчен тухса кайнă чухне, вырăс паттăрлăхне пула гунсенчен тасатнă тата тепĕр хут чĕрĕлнĕ Крымран тухса кайнă чухне эпĕ Сире пурне те тав тăватăп. Совет территорийĕнчен тухса кайнă чухне эпĕ Сире пурне те, Сирĕн руководительсене, пуринчен ытла Сирĕн аслă çулпуçа Верховный Главнокомандующие Сталин Маршала пĕтĕм тĕнчипе, пур океансем тăрăх тата çĕр чăмăрĕн пур пайĕсенче те сапаланса пурăнакан Британи халăхĕ паттăр вырăс халăхĕпе унăн çарĕсенчен тĕлĕнсе савăнни çинчен пĕлтеретĕп. Вырăс халăхĕ хăй çав тери чаплăн сирсе янă йывăр инкеке урăх нихăçан та ан куртăр тесе эпир турра кĕлтăватпăр».

США-н Государство секретарĕ Эд. Стеттиниус господин СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патне янă çыру

Эсир тата Сирĕн Правительство мана тата манăн туссене Совет Союзĕнче çав тери ăшă кăмăлпа йышăннăшăн хам енчен тав тумасăр кун иртерме пултараймастăп эпĕ. Пирĕншĕн пурсăмăршăн та çак событи асра юлмалла событи пулса тăчĕ, вăл Крымри историллĕ конференцире çывăххăн пĕрлешсе тунă творчествăллă ĕçсене пула пулчĕ.

Хам енчен эпĕ паян ирхине аэродромран тухса каяс умĕн калание тепĕр хут аса илтересшĕн: эпĕ çĕнĕ тус тупрăм. Вăрçăра та, вăрçă хыççăнхи мир вăхăтĕнче те Сирĕнпе туслă тата çывăх пĕрлешсе, малалла та ĕçлессине эпĕ шансах тăратăп. Эпĕ Сире Калифорнире саламлама пултарăп тесе питĕ шанса тăратăп.

Пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эд. Р. СТЕТТИНИУС, кĕçĕнин.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн ирхи ларăвĕнче Франци делегачĕ Газье «мирлĕ вăхăтра тĕнчене йĕркелесси çине профсоюзсем мĕнле пăхмалли çинчен» калакан резолюцие вуласа панă. Вăл резолюцие конференци уйăрнă комитет хатĕрленĕ.

Резолюцире çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ, мирĕн социальнăй тата экономика ыйтăвĕсене пăхса тухнă хыççăн, профсоюз юхăмĕн ответлă та тивĕçлĕ представителĕсем мир тăвас ĕçĕн пур тапхăрĕсенче те хутшăнса ĕçлемелле, тесе шутлать. Пĕрлешнĕ нацисем агрессие хирĕç пыракан кĕрешӳĕн хальхи юлашки тапхăрĕнче хăйсем тăрăшнине чакармалла мар, пĕтĕмĕшпе тăшмана пĕр сăмахсăр парăнтарас тĕлĕшпе нимĕн умĕнче те чарăнса тăмалла мар.

Резолюцире çапла каланă: Крымри конференци декларацийĕнче «Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ рабочисем тăрăшни ахаль пулманнине курса тăрать».

Мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли тата Атлантика хартийĕн принципĕсене пурнăçа кĕртмелли пĕтĕм тĕнчери организацие тăвасси çинчен Крымри конференци йышăннă решение, çавăн пекех Сан-Франциско хулинче конференци пухасси çинчен йышăннă решение çав резолюцире ырланă. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ çапла шутлать: Пĕрлешнĕ нацисен правительствисем Атлантика океанĕнче тĕл пулнă чухне тата Мускаври Тегеранри конференцисенче тĕл пулнă чухне тунă декларацисенчи принципсене хирĕçле политика тытса пыракан тата çав принципсене хирĕçле экономика системиллĕ государствăсене йышăнмалла мар».

Резолюцире малалла çапла каланă: «Думбартон-Оксра туса хунă плана хăвăрт пурнăçа кĕртме кирлĕ, тесе шутлать конференци. Думбартон-Оксра тума палăртнă ассамблейăн тĕп задачăсенчен пĕри—пĕтĕм тĕнчери картельсемпе монополистсен ĕçĕсене чакарасси пулать. Çавăн пекех тата экономика тĕлĕшĕнчен эксплоатацилекен колонисем, пăхăнса тăракан çĕршывсем тытса тăрас йĕркене пĕтерсе хумалла, вăл çĕршывсенче халех ирĕклĕ профсоюзсем туса хума пулăшмалла».

Конференци союзлă виçĕ правительствăран Сан-Франциско хулинче пулмалли конференцие профсоюзсен представителĕсене канашлакан сасăпа яма ирĕк пама ыйтнă.

Февралĕн 16-мĕшĕнчи каçхи ларура конференци çав резолюцие тӳрлетсе тата хушса хурса йышăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра ĕнер профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ федерацине туса хурасси çинчен калакан сĕнĕве пĕр саслăн йышăннă. Çавăн пекех вăл организацин структурине палăртма комитет уйăрса хунă. Çав комитетăн членĕсем çитес эрнерех пĕрремĕш хут пухăнмалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ февралĕн 17-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем Германире Клеве хулинчен хĕвелтухăçнерехре ларакан пункта тытса илнĕ. Кăнтах кăнтăрарахра Калькар хулипе Клеве хули хушшинчи чугун çул хĕррипе çаплах хаяр çапăçусем пынă. Союзниксем хăйсен Маас шывĕ çинчи укреплениĕсене аслăлатнă.

Люксембургри Эхтернах хулинчен çурçĕтерехре союзниксем чĕрĕк миля малалла кайнă та Энц шывĕпе Прюм шывĕ тăпăхĕнчи çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Союзниксен Эхтернах хулипе Иррель хули хушшинчи чугун çул çине тухнă чăсĕсем тăшманăн темиçе дотне пĕтерсе тăкнă, вĕсем Иррель хулинчен çур мильăра ларакан пункт патне çывăхарнă. Эхтернах хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксем, тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, Сюр шывĕ тăрăх çур миля малалла кайнă. Союзниксен чăсĕсем Минден хулинчен çур миля çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан пункт патне çитнĕ.

Ремих хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Зинц хули районĕнче тăшман пехотипе танкĕсем икĕ хут контратака тунă та темиçе дота каялла туртса илнĕ.

Февралĕн 14-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 1.258 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Вăтам тата йывăр бомбардировщиксемпе истребитель-бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшман çулйĕрĕсене, чугун çул деповĕсене тата Руртан çурçĕтерехри, хĕвелтухăçнерехри, çавăн пекех тата Рейн шывĕ улăхĕнчи ытти объектсене пыра-пыра тапăннă. Союзниксен авиацийĕ Золинген хулинчи авиаци заводне тата Унна хулинчи тупă заводне тапăннă. Истребитель-бомбардировщиксем Леверкузен хулинчи хими заводне атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ февралĕн 17-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, 5-мĕш армипе 8-мĕш арми фрончĕсенче, разведчиксем шыраса çӳренĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германири Клеве хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен чăсĕсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе пырса, чылай малалла кайнă. Рейн облаçĕнче Луисендорф хулине йышăннă хыççăн союзниксен çарĕсем Зигфрид линийĕ çинчи тĕреклетнĕ пысăк хуласем пулса тăракан Калькарпа Гох хушшинчи тĕп чугун çула татнă. Союзниксем Гох хулине çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăçенчен хупăрласа пыраççĕ.

Прюм шывĕ çинчи укрепление союзниксем аслăлатнă. Тăшмана бетонран тупă чылай укрепленисенчен сирсе кăларнă хыççăн союзниксен чăсĕсем Хассум тата Аффельден хулисене йышăннă.

Эхтернахран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре (Германипе Люксембург хушшинчи чикĕ çывăхĕнче) союзниксен çарĕсем Рорбаха, Шанквейлера кĕрсе кайнă. Союзниксен ытти чăсĕсем Шанквейлертан çурçĕр-хĕвеланăçнерехри пĕр çӳллĕ вырăн патне çитнĕ. Çав районти Сюр шывĕ çинчи тĕреклетнĕ вырăнăн урлăшĕ халĕ 3 миля çурра çитет.

Февралĕн 15-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăçĕнче 1.090 çынна тыткăна илнĕ.

Çанталăк япăх пулин нумай районсене авиаци ĕçне чăрмантарнă. Авиаци соединенийĕсем Майн çинчи Франкфуртри тата Гиссенри чугун çул объекчĕсене тапăннă, çавăн пекех тата Франкфурт, Лимбург, Мюнхен тата Ульм районĕсенчи транспорт объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Италире союзниксен чăсĕсен патрулĕсем çапăçнă. Авиацин пысăк соединенийĕсем Бреннер тавăççи районĕнче тата çурçĕр-хĕвелтухăç Италире тăшманăн çулйĕрĕсене тапăннă.

Венгрире çĕнĕ çар тăваççĕ

ДЕБРЕЦЕН, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрин ирĕке кăларнă çĕрĕ çинче Венгрин çĕнĕ çарне добровольцсем илесси ăнăçлăн пырать. Чылай хуласемпе ялсенче çак ыйтупа йышлă митингсем пулса иртнĕ. «Дебрецен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нумай ялсенчен çĕршер добровольц пыраççĕ. Добровольцсем хушшинче нумайĕшĕ хресченсем тата промышленноçри рабочисем. Çара кайма пынисенчен 6 проценчĕ—хĕрарăмсем. Венгрин ирĕке кăларнă столицинче—Будапештра—çĕнĕ çара каяс текенсем нумай çырăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Трактористсем ăмăртса ĕçлеççĕ

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Çĕрпӳ МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем тата тракторсене юсакан рабочисем ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура яланхи пекех Захаров юлташăн бригади малта пырать. Унăн бригади хăй çумне çирĕплетнĕ виçĕ трактора февралĕн 7-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерчĕ. Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕлне Захаров юлташăн бригади тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентарьпе ытти ялхуçалăх машинисене те юсаса пĕтерме обязательство илчĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн бригадăри кашни тракторист ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Çавăн пекех тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас тĕлĕшпе 3-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Д. Иванов), 10-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Т. Семенов), 1-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Д. Кириллов) лайăх ĕçлеççĕ. Çак бригадăсем хăйсен тракторĕсене юсаса пĕтерчĕç, халĕ тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерессишĕн пикенсе ĕçлеççĕ. Тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсанă çĕрте трактористсем хушшинчи ăмăрту саралнăçемĕн саралса пырать.

Анчах МТС-ра чăтма çук юлса пыракан бригадăсем те пур-ха. Уйрăмăнах 4-мĕш трактор бригади (бригадирĕ В. Иванов) 2-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Е. Орлов), 11-мĕш трактор бригади (бригадирĕ К. Мосин) тата 7-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Картошкин юлташ) начар ĕçлеççĕ. Вĕсем виçшер трактор юсас вырăнне пĕрер трактор кăна юсанă. Çак бригадăсен ĕç условийĕсем ытти малта пыракан бригадăсеннипе пĕрех. Сăлтавĕ пĕтĕмпех бригадирсем ĕçе пĕлсе йĕркелеменнинчен тата трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва кирлĕ пек организацилеменнинчен килет.

Çакна шута илсе, эпир лайăх ĕçлекен бригадăсенчи пысăк опытлă трактористсене юлса пыракан бригадăсем çумне çирĕплетремĕр. Вĕсем хăйсен тракторĕсене юсанă чухнехи ĕç опычĕсемпе юлса пыракан бригадăсене паллаштараççĕ тата юсама пулăшаççĕ. Çапла майпа ĕçлесе, эпир тракторсене юсас ĕçе февраль уйăхĕнче пĕтĕмпех вĕçлеме шутлатпăр.

П. ГРИГОРЬЕВ,
Çĕрпӳ МТС-ĕнчи парторганизаци секретарĕ.

ГОМЕЛЬТИ СТАНОКСЕМ ТАВАКАН ЗАВОДА ЮСАÇÇĔ

Белоруссии ССР-ĕнчи чи пысăк завода—Гомельти Киров ячĕпе тăракан станок заводне нимĕçсем аркатса тăкнă пулнă. Халь ăна хăвăрт юсаççĕ. Завода çĕнĕ оборудовани илсе пынă. Тĕп цехсене юсаса çитерне те ĕнтĕ.

Завод çулленех 500 станок туса кăлармалла. (ТАСС).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—25.

НТ 00029 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 16.000